Прокуратура материалĕсем тăрăх

## Салтака каяссинчен пăрăннăшăн

«Çар тивĕçĕ тата çар служби çинчен» Федераллă саккунпа килĕшÿллĕн çар службинче пуласси, Тăван çĕр-шыва хÿтĕлесси кашни яшăн таса тивĕçĕ пулса тăрать. Шута илмелли сăлтавсăрах тĕрлĕ майсемпе салтака каяссинчен пăрăннăшăн е тарса çÿренĕшĕн саккунпа килĕшÿллĕн айăплисене ответ тыттарма пăхнă.

Вулакансем астăваççĕ пулĕ, кун пек факт пулни пирки район хаçачĕнче кăçалхи июль уйăхĕнчех çырнăччĕ ĕнтĕ. Хăйĕн тăванне В.В. Федорова салтака каяссинчен хăтарса хăварас тĕллевпе Юнкăри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкул директорĕ Владимир Геннадьевич Федоров вăл çак шкулта технологи учителĕ пулса ĕçлет тесе суя документсем хатĕрлесе пани, уншăн ăна Муркаш район сучĕ хăйĕн 2008 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе 2 çул та 6 уйăх ирĕкрен хăтарма йышăнни, ку срока условно тесе йышăнни, тĕрĕслев вăхăтне 2 çул тесе палăртни пирки каласа панăччĕ.

Халĕ вара çак ĕçпе çыхăннă тепĕр суд ларăвĕ пирки сăмах. Вăл 2008 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче пулчĕ. Паллă ĕнтĕ, взятка паракан та, ăна илекен те саккун умĕнче явап тытма тивĕç пулнă пекех, суя документсем хатĕрлекен те, салтак службинчен пăрăнас тĕллевпе ăна хатĕрлеттерекен те ответ тытма тивĕç. Çапла вара ку хутĕнче суд ларăвĕнче В.В. Федоров тĕлĕшпе çыхăннă ĕçе пăхса тухрĕç, РФ Уголовнăй Кодексĕн 327-мĕш статйин 3-мĕш тата 328-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе пăхнă преступленисене тунăшăн РФ Уголовнăй Кодексĕн 69-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе килĕшÿллĕн преступленисене пĕрле шутласа 10 пин тенкĕ штрафлама йышăнчĕç.

Çапла, саккун умĕнче пурте тан. Яшсене вара хăйсен çĕршыв умĕнчи таса тивĕçне пурнăçласинчен пăрăнни ниепле те чыс тумасть.

**С. КОШКИН,**
**РФ прокуратури çумĕнчи Чăваш Республики тăрăх Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн аслă следователĕ.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Тĕрленчĕк

Уртса янă шурă шупăрсем,
Ращара ташлаççĕ хурăнсем.
Ăмсанса пăхаççĕ çăкисем –
Кĕмĕл тĕслĕ çук-çке алкисем.

Чупса тухнă кÿлĕ хĕррине
Хĕрлĕ сăхманпа яш вĕрене,
Алхасаççĕ вĕçкĕн ăвăссем
Хĕр çураçнă каччă евĕрсем.

Шыв енне пуç уснă ват йăмри –
Çухатмарăн пулĕ куç кĕски?
Васкатать, ав, илĕртет палан,
Çырлине парас тет пĕр çупкăм.

– Мĕншĕн хуйхă пусрĕ, хурама,
Пит салхуллă, кăмăлсăр тăран?
Питĕ шел çемçешкĕ хăвана:
Шăнса хытнă мĕскĕн, çар уран.

Кĕркунне! Кам калать сана
кичем тесе?
Эсĕ хÿхĕм, капăр та чипер!

**Луиза КОНДРАТЬЕВА.**
**Муркаш ялĕ.**

Паянхи кун ыйтăвĕсемпе

# Пурăнатпăр çĕр çинче пĕрре

Кашни çын çĕр çинче пĕрре çеç пурăнать. Çавăнпа та кашниех хăйĕн ĕмĕрне май килнĕ таран лайăхрах пурăнса ирттерме тăрăшать. Анчах та çак лайăххах тени кашни çыншăн хăйне евĕр иккен.

Перестройка пуçланнăранпа 20 çул ытла иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Анчах та лайăххине кĕтни пуриншĕн те пулаймарĕ. Малтанхи пурнăçра пире чуна парса ĕçлеме, таса чунлă пулма, Тăван çĕршыва юратма вĕрентетчĕç. Вĕрентетчĕç кăна мар, етеме пурăнма, ĕçлеме условисем, майсем туса паратчĕç. Ялсенче пурăнакансен кашнийĕнех ĕç выранĕсем пурччĕ. Шкул пĕтерекен çамрăксем валли малалла вĕренме кайма майсем те çителĕклĕччĕ. Халĕ вара «бизнесмен» пулмарăн пулсан...

Е тата çынсен сывлăхĕшĕн патшалăх чăннипех тăрăшатчĕ. Мĕн чухлĕ тÿлевсĕр путевкăсем паратчĕç ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене. Хăть Хура тинĕс хĕррине, хăть Кавказа кай. Халĕ вара путевкăсене тÿлесе илме мар, санаторие е канмалли çуртра çитме çул укçишĕн тÿлеме те ял çынни пултараймасть. Кĕсье тулли укçаллисем кăна тасçта та çитме пултараççĕ.

Ял çыннин чирлеме юрамасть. Чирлерĕн пулсан, кĕлмĕç пулса юлатăн. Укçасăр утăм та ярса ан пус. Ăсталла каятпăр-ха эпир?

Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ район больницине те çулсеренех пĕтерсе пыма тăрăшаççĕ. Паянхи куна кунта ача çуратмалли уйрăма, ачапăчана сыватмалли уйрăма пĕтернĕ ĕнтĕ. Çитес 2009 çулта тата 25 çын выртса сывалмалли вырăна пĕтерме палăртнă.

Асăннă больницăна уçни кăçал 130 çул тултарчĕ. Епле йывăр вăхăтра та халăх сывлăхĕ пуянлăх пулнине пĕлнĕ, çакна валли укçатенкĕ те пулнă. Халĕ вара çапла туни халăхшăн тăрăшни пулать-ши?

Кунти больницăра мĕн чухлĕ опытлă специалистсем ĕçлеççĕ. Мĕн чухлĕ çын вĕсене тав сăмахĕ каламасть пулĕ. Сывалма выртма халĕ те çынсем черет кĕтеççĕ.

Е тата ÿсекен ăрăвăн сывлăхĕн ыйтăвне тишкерсе пăхар. Эпир пурте çул çитнĕ каччăсен сывлăхĕ çар службине кайма нумайăшĕн юрăхсăр пулнă пирки илтнĕ ĕнтĕ. Мĕнле-ха капла? Малтанхи вăхăтра кун пек пулман вĕтха?

4 çул каялла шкулсенче ачасене апатланма пĕр ача пуçне патшалăх 1 тенкĕ те 50 пус уйăрса паратчĕ пулсан, халĕ пĕр пус та çук. Нумай çемьере вара ашшĕ-амăшĕсен ĕçлеме ĕç вырăнĕ те çук. Мăн Сĕнтĕрте кăна мисе предприяти пĕтрĕ. Шкулсене хаклă компьютерсемпе пуянлатрĕç, анчах ачасен сывлăхĕ пирки манчĕç.

Кунсăр пуçне ача-пăчана пăхса пурăнма патшалăх парасан пособи калăпăшне илер-ха. Çулсерен çак пособи калăпăшĕ пĕр-икĕ памперс илме юрăхлă шайра тăрать. Нивушлĕ «çÿлте ларакансем» хушшинче укçа шутлама пĕлекен çынсем çук пулĕ? Паллах пур, анчах вĕсем укçине хăйсем валли анчах шутлаççĕ.

Çулсерен пирĕн Раççейре миллиардерсен шучĕ ÿссе пырать. Хура халăх вара хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатаймасть. Шалу е пенси укçи ниепле те газшăн, электроэнергишĕн, çунтармалли тата сĕрмелли материалсемшĕн, апат-çимĕçшĕн тÿлеме çитсе пымасть. Анчах та мĕншĕн вара çак инфляципе пĕрле эпир туса илнĕ тĕш тырă, çĕр улми, сĕт, аш-какай хакĕсем ÿсмеççĕ? Çак хаксем кăштах хăпарчĕç пулсан, тÿрех çÿлте ларакансем «регулирование цен» теме пуçлаççĕ. Мĕншĕн-ха çак ĕçе вĕсем паян бензин, дизтопливо хакĕсене йĕркеленĕ çĕрте тумаççĕ?

Хаçатсенче çырнă тăрăх хальхи вăхăтра Америкăра нефть йÿнелнĕ пирки бензинăн пĕр литрĕн хакĕ 14–15 тенкĕрен ытла мар. Пирĕн хамăрăн нефть çителĕклĕ çĕр-шывра вара самай хаклăрах.

Ял хуçалăхĕ пирки те каласкаланă пек тăваççĕ анчах. Çитес 2009 çул валли те çак сывлăш пек кирлĕ отрасле бюджетран пĕр процентран та сахалтарах укçа-тенкĕ уйăрса панă. Мĕнле аталанмалла ял хуçалăхĕн ку укçапа?

Чылай чухне фермерсем пирĕн пуласлăх, вĕсем пире тăрантарĕç теççĕ. Ман шутпа, паянхи фермерсен ытларах пайĕ – вăхăтлăх кĕсье тултаракансем. Çак фермерсем, пурте тенĕ пекех, хăйсен ĕçĕнче агрономи наукине пăхăнмаççĕ. Вĕсен пусă çаврăнăшĕ те çук, çĕр пулăхлăхне ÿстерме нимĕн те тумаççĕ. Вĕсем паянхи кун ĕçлекен лаптăксем çинчи тăпран пулăхлăхĕ тепĕр 7–8 çултан тыр-пул ÿстерме юрăхсăра тухни каламасăрах паллă.

Эпир телевизорпа та, хаçатсенче те пирĕн пурнăç, экономикăпа производство лайăхланаççĕ тенине илтетпĕр. Анчах темшĕн хамăр пурнăçра çакă курăнсах каймасть. Районти ял хуçалăх предприятийĕсем те çултан-çул çитĕнÿсем туни курăнмасть. Ял хуçалăх предприятийĕсем кăна-и? Çавăнпа та çĕр-шыв ертÿçисен шайĕнчех çирĕп мерăсем йышăнни, пĕрремĕш вырăна пустуй каласусене мар, производство ыйтăвĕсене кăларса тăратни кирлĕ.

Кунпа пĕрлех коррупципе кĕрешессине те манăçа хăварма кирлĕ мар. Сăмахпа кăна мар. Унсăрăн патшалăх çак «чиртен» сывалас çук. Ку каллех Президентран килет.

Юлашки вăхăтра пирĕн çĕр-шывра чиновниксен шучĕ калама çук ÿссе кайрĕ. Ял çыннине çак ÿссе кайнă аппарат мĕн чухлĕ нушалантарать: çĕр илнĕ çĕрте те, кил-çурта регистрацилес пулсан та, çурт лартсан электроэнергипе усă курас тесен те… Кашни хут татăкĕшĕн каллех укçа тÿлемелле, тата мĕн чухлĕ хаклă вăхăта сая ямалла. Ку ыйтусемпе те хальлĕхе пустуй каласнисĕр пуçне лайăх еннелле улшăнусем курăнмаççĕ.

Этем ĕмĕрĕ курăксеннипе евĕрлĕрех пулĕ. Кашни çын хăйĕн пĕртен-пĕр ĕмĕрне çын пек йĕркеллĕ пурăнса ирттерес тесе ĕмĕтленет. Этем пурнăçра хăш еннелле сулăнасси, ман шутпа, этемрен кăна килмест, вăл ытларах патшалăха ертсе пыракансенчен килет. Çыннăн ĕç вырăнĕ пулсан, пурнăçри тĕллевĕ пулсан тата ăна пурнăçлама патшалăх ертÿçисем кирлĕ пек майсем туса парсан, паллах, çынсен ытларах пайĕ хăйсен этемлĕх чысне çÿллĕ шайра тытнă пулĕччĕ.

Тен, пурте ман шухăшсемпе килĕшмĕç. Каласăва чĕнетĕп.

**П. ВОРОБЬЕВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**

Астăвăм

# Муркаш шкулне, паркне çĕклерĕмĕр

Ун чухне эпĕ Сĕнтĕр (халĕ Етĕрне) районне кĕрекен Юванорти вăтам шкул директорĕнче ĕçлеттĕм. Муркаш райĕçтăвком председателĕ П.П. Петров ыйтнипе республика çут ĕç министрĕн хушăвĕпе мана 1957 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче Муркашри вăтам шкул директорĕ пулма çирĕплетрĕç. Павел Петрович пирĕн шкулти лару-тăрăва аван пĕлнĕ, Муркаш шкулĕнче те ĕçлеме пултаракан опытлă директор кирлĕ тесе шутланă.

280 ача вĕренмелĕх шкулăн икĕ хутлă йывăç çуртне тăвасси ун чухне вăраха тăсăлнă пулнă. Стенасен 6-мĕш ретне кăна хума тытăннă. Строительство материалĕсем, платниксем çитмен. Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм: кăмакасене хутма вутă та çукчĕ вĕт-ха. Вуттине çурхи йĕпе-сапа пуçлансан Ильинкăран тракторсемпе турттарса килтĕмĕр.

Республика Правительствин йышăнăвĕпе Улатăр районĕнчи вăрман хуçалăхĕнче, Муркаш лесничествинче касмалли вăрман тăрăхĕсем уйăрса пачĕç. Унта та Муркашсем пулнă иккен. Йывăрлăхсене пăхмасăрах вăрман касассине йĕркелеме пултартăмăр. Ĕçĕ вара кунпа кăна вĕçленмест-ха. Каснă йывăççене тиесе тухмалла, хыççăн юлнă мĕн пур туратсене пуçтарса тасатмалла, каснă лаптăка йывăççем çĕнĕрен лартса хăвармалла пулнă.

Каснă йывăççене Киря станцине илсе тухрăмăр. Кунтах вăрман промышленность хуçалăхĕнче пĕр пайне хăмасемпе пăрăссем валли касса вакларăмăр. Хатĕрленĕ материала тата ытти йывăçа чукун çулпа Ишлей станцине ăсатрăмăр. Вакунсене хăвăрт пушатмалла тата йывăç материалсене Муркаша турттарса çитермелле пулнă. Ку тĕлĕшпе пире «Знамя труда» колхоз председателĕ Е.А. Андреев пысăк пулăшу кÿчĕ. Хăш чухне 50 лав тарана хах уйăрса паратчĕ.

Çулла тата кĕркунне шкул тăвас ĕçе çĕнĕрен пуçăнма май килчĕ. 1958 çулта шкул тăвас ĕçе вĕçлеме, çĕнĕ вĕренÿ çулне çĕнĕ çуртра пуçăнма палăртрăмăр. Строительство ĕçĕсене пула ку çул эпĕ черетлĕ отпуска каяймарăм кăна мар, канмалли кунсенче те ĕçлеме тиврĕ. Мĕншĕн тесен платниксем канмалли кунсенче те ĕçлетчĕç.

Муркашра кашни эрнерех пасар, çуллен вара Муркаш пуххи иртетчĕ. Пасар та, уяв пуххи те шкул умĕнчи лапамра пулатчĕç. Хăшĕсем тăн çухатиччен ĕçсе лартатчĕç. Çакă вара район центрне ниепле те илем кÿме тĕллевпе пасар лаптăкне пĕчĕклетме, учительсен хваттерĕсем пулнă кивĕ çуртсене пăсса унта кану паркĕ йĕркелеме сĕнтĕм. Евтихий Андреевич, ĕçлемесĕр пурăнакансемпе эрехпе туслисене чăтма пултарайманскер, пултарайман.



1957 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче районти партконференци пулса иртрĕ. Эпĕ унта делегат пулса хутшăннă май тухса каласрăм, шкул умĕнче тăракан йывăрлăхсем, строительство тĕлĕшпе татса памалли проблемăсем пирки каласа патăм. Юлашкинчен вара пасар кунĕсенчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес парк йĕркелессипе манăн сĕнÿпе шутласа тăмасăрах килĕшрĕ.

1958 çулхи май уйăхĕнче ирхине ирех ман пата райĕçтăвком председателĕ П.П. Петров шăнкăравларĕ.

– Эсĕ шкул умĕнче парк йĕркелеме сĕнтĕн. Ку ыйтăва эпир татса парас терĕмĕр. Сан пата часах манăн çум С.А. Афанасьев пырать. Унпа пĕрле парк пулмалли вырăна палăртăр, картиш тытма йĕри-тавра шалчасем çапса тухăр,– терĕ вăл. Эпир Сергей Афанасьевичпа пĕрле парк планне туса хатĕрлерĕмĕр. Унта мĕн лартмаллине, тирпей-илем кĕртмеллине палăртма пенсионер-агрономпа Петр Чугуновпа калаçса пăхас терĕмĕр. Пире вăл хаваспах йышăнчĕ, карта тытнă хыççăн пулас парк территорине сухаласа курăк акма, кĕркунне вара илем кÿрекен йывăççем лартса хăварма сĕнчĕ.

Çавăн пек турăмăр та. Çулла пирĕн шкулта ĕçлекенсем темиçе лав утă çулса хатĕрлерĕç, ăна сутса укçипе парка тирпей-илем кĕртнĕ çĕрте усă куртăмăр.

1958 çулхи кĕркунне районти комсомолецсем паркра йывăççем лартас ĕçе активлă хутшăнчĕç. Парка вара комсомол 40 çул тултарнин ятне парас терĕмĕр.

Манăн район больницин фельдшерĕ А. Белов тунă сăн ÿкерчĕк сыхланса юлнă. Унта парк йĕри-тавра тытнă картапа хапха, çамрăк йывăççемпе аллея аван курăнаççĕ. Сулахайра çÿлти кĕтесре вара учительсен хваттерĕсен юхăнчăк çурчĕсем. Вăл çуртсене эпир пăсрăмăр. Вĕсенчен хăшĕсене капиталлă юсанă хыççăн Муркаш хĕррине, район больниципе юнашар лартрăмăр. Унтах шкул учителĕсем Е.И. Назарова, Анисовсем, Федоровсем, Гавриловсем валли çĕнĕ çуртсем те туса лартрăмăр. Елена Ивановна валли хваттер тунă çĕрте унăн мăшăрĕ, комсомол райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçленĕ Борис Александрович Назаров чылай пулăшрĕ. Ку çĕнĕ урама Учительсен урамĕ тесе ят патăмăр.

Вăхăт иртнĕ май парк ÿссе хитреленчĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсене асăнса палăк лартнă хыççăн пушшех те. Парк Муркашра пурăнакансен канмалли юратнă вырăнĕ пулса тăчĕ.

**М. ГАВРИЛОВ,**
**1957–1962 çулсенче Муркаш шкулĕн директорĕ, РСФСР тата Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ, халăха çутта кăларас ĕç отличникĕ.**

**Сăн ÿкерчĕкре: Муркашра комсомол 40 çул тултарнине халалласа уçнă парк. 1959 çул.**